25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮНЬ
10
ЮНКУН
133(6068)-мĕш №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва кашни предприяти хутшăнтăр

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ хăйĕн майăн пĕрремĕшĕнче панă приказĕнче пирĕн патăр Хĕрлĕ Çар умне пысăк задача — 1942 çулта нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкса, совет çĕрне гитлерла захватчиксенчен ирĕке кăларас задача лартрĕ. Çак татăклă задача фронтри боецсен хастарлăхне ÿстерипе пĕрлех, тылри ĕççыннисен ĕçлес кăмăлне вăйлатрĕ, фронтпа тыла тата тачăрах пĕтĕçтерчĕ. Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине вăхăтра тата çителĕклĕ таран парса тăрас тесе, тимĕр-тăмăр шăратакансем, самолетсемпе танксем тăвакансем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнсе кăларĕç. Çак патриотизмлă пахалăха, пуçару çĕршывăн пур кĕтессисене те хăвăрт тата хăватлăн сарăлчĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва химиксем, железнодорожниксем, текстильщиксем, электриксем, колхозниксем, тракторист тата ытти сем те тухрĕç. Ăмăртăва пĕтĕм халăх хутшăнчĕ.

Пирĕн Чăваш республикинчи предприятисемпе артельсем, МТС-семпе колхозсем те çак пĕтĕм халăх ăмăртăвĕн тулашĕнче тăрса юлмаççĕ. Вĕсем ăмăртăва хутшăнса, тăван Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйран пулăшма, фронт заказĕсене срокчен тата лайăх пурнăçлама пулаççĕ. Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ иккĕмĕш кварталта васкавлă продукци памалли тата вагонсем юсамалли плансене июнĕн 22-мĕш тĕлне тултарма, металл, топливо тата электроэнерги расходлассине чакарма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма пулса обязательствăсем илнĕ. Çакăн пек татăклă обязательствăсем Çĕмĕрлери тата Куславккари комбинатсен коллективĕсем, Канаш, Вăрнар, Йĕпреç станцийĕсенчи железнодорожниксем, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ тата ытти районсенчи артельсемпе мастерскойсенче ĕçлекенсем те илнĕ.

Республикăри предприятисемпе артельсен коллективĕсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннăранпа пĕр уйăх иртрĕ. Малта пыракан коллективсем çак вăхăтра производствăлла пысăк çитĕнÿсем турĕç. Çĕмĕрлери, Куславккари комбинатсем май уйăхĕнчи производство планĕсене ытлашшипех тултарчĕç, Канашри вагонсем юсакан, Улатăрти паровоэсем юсакан заводсем те май уйăхĕнче апрельринчен лайăхрах ĕçлерĕç.

Халыхи вăхăтра социализмлă ăмăртура республикăри предприятисенчен Шупашкарти электроаппаратура заводĕ малта пырать. Завод май уйăхĕнче продукци памалли плана та, çавăн пекех васкавлă заданисене те ытлашшипех тултарнă тата нумай тĕрлĕ продукцисене те техникăллă условисене юрăхлă туса панă. Çавăншăн завод коллективне Профессилĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе Промышленноçăн пĕр Халăх Комиссариачĕ хăйсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пама йышăннă.

Электроаппаратура заводĕнче ĕçлекен рабочисене, инженерно-технически работниксене тата служащисене — Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура çĕнтерекенсене — чыс та мухтав!

Лайăх работниксен тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларас йăла çук, вĕсем тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе малалла тата пысăкрах çĕнтерÿсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Электроаппаратура заводĕнче ĕçлекенсем июнĕн 8-мĕшĕнче пулнă митингра хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç: иккĕмĕш кварталти производство программине июнĕн 22-мĕш тĕлне, çак уйăхри производство планне 27 кун хушшинче тултарма пулчĕç.

Çакăн пек ĕçлес пулать республикăри мĕн пур предприятисемпе артельсенчи рабочисен те, инженерсемпе техниксен тата служащисен те.

Социализмлă ăмăртăвăн ăнăçлăхне илнĕ обязательствăсем пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăни, малта пыраканссем çинчен пурне те пĕлтерсе тăни тата юлса пыраканссене пулăшу парса тăни татса парать. Унсăр пуçне, ăмăрту ăнăçлăхĕ ăмăртăва ĕççыннисен анлă массисене хутшăнтарнинчен килет, ăмăртăва кашни рабочи, служащи, инженерпа техник хутшăнмалла тăвас пулать, ĕçе çĕнĕрен кĕнĕ рабочисене те ăмăрту тулашне хăварас пулмасть. Социализмлă ăмăрту чăн-чăн массăллă, хăватлă ăмăрту пулса тăтăр. Ăмăртусен опычĕ çакна кăтартать: ăмăртăва кашни рабочи хутшăннă тата илнĕ обязательствăсем пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине куллен тĕрĕслесе тăнă çĕрте предприяти мала тухать, лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Çав вăхăтрах юлса пыраканссем çинчен те манма юрамасть. Юлса пыраканссемпе калаçнипе уйрăмăн ĕçлес пулать, вĕсене малта пыраканссемпе танлашма пулăшас пулать.

Çаксем пулаççĕ те ĕнтĕ парти, комсомол, профсоюз организацисен тата производство командирĕсен социализмлă ăмăртури задачисем.

Парти организацисен халĕ пĕтĕм халăх хутшăннă ăмăртăва пуçарса ертсе пымалла, рабочисемпе работницăсен производствăлла çĕклен ĕвĕпе усă курса, фронта пулăшас задачăсене пĕтĕмпех тата вăхăтра пурнăçа кĕртсе пымалла.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура пирĕн фабрикăсемпе заводсен, артельсемпе мастерскойсен коллективĕсем хăйсен производствăлла программисене ытлашшипех тултарас, фронт заказĕсене срокра тата пĕтĕмпех пурнăçлас, плантан ирттерсе продукци парас, ĕç тухăçлăхне ÿстерес, ĕç пахалăхне лайăхлатас тĕллеве лартрĕç. Пирĕн чугунçул тата шывçул транспорчĕсенчи работниксем ăмăртура çĕршывпа фронта кирлĕ таварсемпе хĕç-пăшалсене вăхăтра тата пĕр авăрсăр турттарса тăрассишĕн кĕрешеççĕ. Промышленноçпа транспортри нумай тиражлă пичетĕн, стена хаçачĕсен тата агитаторсемпе вулавçăсен хисеплĕ тивĕçĕ—ăмăртăвăн çак тĕллевĕ çинчен кашни рабочипе работницăна ăнлантарса парасси, ĕççыннисен массисене Сталин юлташ хăйĕн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕнче лартнă историллĕ задачăсене пурнăçлама мобилизацилесси пулать. Республикăри кашни предприятин Пĕтĕм Союзри ăмăртура мала тухассишĕн, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илессишĕн кĕрешмелле.

Промышленноçпа транспортри социализмлă ăмăрту саралнă çемĕн сарăлса пырать. Предприятисемпе артельсенчи рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем! Ăмăртăва пурте хутшăнар, ăмăртура пĕтĕм вăя, пĕлĕве тата пултаруллăха курса ĕçлер, çĕршывпа фронта кирлĕ продукцисене вăхăтра тата çителĕклĕ таран парар, 1942 çулта нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкма хамăрăн Хĕрлĕ Çара тата вăйлăнрах пулăшар!

Социализмлă ăмăртăвăн ялавне тата çÿлерех çĕклер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июнĕн 8-мĕшĕнче фронтра палла улшăнусемех пулман.

Фронтăн Севастополь участокĕнче вăйлă çапăçусем пынă. Пирĕн войскăсем противникăн атакисене ăнăçлăн сирсе пыраççĕ, ăна питех те пысăк сухатусем кÿреççĕ.

* * *

Июнĕн 7-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 20 лавне, артиллерин 3 батарейине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, хуралта çÿрекен 3 карапне тата пĕр торпеднăй катерне путарнă, хуралта çÿрекен пĕр карапне тата пĕр транспортне сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть юханшыв урлă каçса кайнă та нимĕçсене халăх пурăнакан 2 пунктран хĕссе кăларнă. Тепĕр участокра халăх пурăнакан Д. пунктшăн пынă çапăçура пирĕн боецсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă. 4 блиндаж тата 7 огневой точка çĕмĕрсе тăкнă. Пирĕн артиллери, противник артиллерийĕн тата миномечĕсен 10 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем нимĕçсен контратакине сирсе янă. Çав çапăçура Пилименко, Кирюхин тата Куликов юлташсен подразделенийĕсем противникăн 10 танкне çĕмĕрнĕ. Танксем çинчи автоматчиксене пулеметсемпе пăшалсенчен персе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Снайпер Семен Намаканов (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) вăрçă пуçланнăранпа 154 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Трифонов юлташ командир пулса ертсе пыракан авиачаçри летчиксем, нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнче кĕрешекен пирĕн чаçсене пулăшса пырса, противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пысăк çухатусем кÿнĕ. Летчиксем 2 кун хушшинче нимĕçсен 14 танкне, 35 автомашинине, горючи тултарнă 6 автоцистернине тата боеприпассем тиенĕ 25 лавне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнче партизансен отрячĕсемпе пĕрле кĕрешекен пирĕн чаçсем противникăн пысăк вăйĕсене хирĕç çапăçса, вĕсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Пĕр участока кăна илсен те, нимĕç оккупанчĕсенне 900 салтакпа офицера тата 8 танка пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра партизансен тата Хĕрлĕ Çар боецĕсен пĕрлешнĕ вăйĕсем нимĕçсен пехотнăй дивизийĕн наступленине чарса лартнă, 1.000 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, юлашки 10 кун хушшинче пирĕн чаçсемпе партизансем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 6.300 çынна вĕлернĕ, 74 танкпа 4 бронемашинăна пĕтерсе тăкнă. Зенитнăй артиллерирен персе çапăçу хирĕ тĕлĕнче нимĕçсен 2 самолетне ÿкернĕ.

* * *

Нимĕçсен 1-мĕш моторизованнăй «СС» бригадин 1-мĕш полкĕнчи 11-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ унтер-офицер Гильмарт Ленк çапла каласа панă: «Пирĕн бригада нумай вăхăт хушши резервра тăчĕ. Вăл тылра полицейскисен карательнăй функцийĕсене туса пычĕ тата вырăс партизанĕсемпе кĕрешес ĕçе туса тăчĕ. Çак кунсенче çеç пире фронта илсе килчĕç, вара бригада йывăр çухатусем тÿсрĕ. 11-мĕш ротăра 140 çынран 22 çын кăна юлчĕ. Полкра 500 салтакпа офицертан ытла юлман. Пĕр М. местечкăра кăна 100 çын ытла пытарнă. Пирĕн бригадăри эсэсовецсем хăйсен мăнкăмăлланса çÿрес йăлине пăрахрĕç, халĕ вĕсем ытти çар чаçĕсенчи салтаксенчен нимĕнпе те уйăрăлса тăмаççĕ. Вăрçă пире те йăлăхтарса çитерчĕ. Германи çĕнтерессине нумайĕшĕ ĕненми пулчĕç. Россия пек çавтери пысăк та пултаруллă государствăна çĕнтерме май çуккине эпир пĕлетпĕр. Ăссăр тата шанчăксăр ĕçшĕн пĕрре те çапăçса вилес килмест манăн. Эпĕ совет листовкисене питех те нумай вуласа тухрăм та, вара çакна пĕлсе çитрĕм: манăн пеккисен пĕр çăлăнăç кăна, вăл—тыткăна парăнса чĕррĕн юласси».

* * *

Нимĕçсен унтер-офицерĕ Вальтер Пехан хăйĕн пиччĕшĕ унтер-офицер Карл патне çапла çырнă: «Йывăр кунсем курмалла пулчĕ. Эпĕ хамăн мĕн пур япаласене пĕтĕмпех çухатрăм. Пирĕн танксем, орудисем, полевой почта та пулин противник аллине лекрĕç. Бомбардировщиксем кашни сехетрех вĕçсе килсе тапăнаççĕ. Румынсемпе ĕç япăх—çав хуйхă-воякăсем пирки пирĕн кашни утăмрах сиен курма тивет».

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем Ленинград облаçĕнчи В. Нива, Белько во тата Першнево ялĕсене тĕппипех пĕтерсе лартнă. Гитлеровецсем çав ялсенче пурăнакан халăха, вăрмана тарса пытанма ĕлкĕрейменнисене, пĕтĕмпех персе пăрахнă.

* * *

Петровац сывăхĕнче (Югославия) июнь уйăхĕн пуçламăшĕнче Югослави партизанĕсемпе итальянецсен чаçĕ хушшинче çапăçу пулса иртнĕ. Партизансем, фашистсене аркатса тăкнă, вара лешсен каялла чакмалла пулнă. Итали оккупанчĕсем çав çапăçура хăйсен 200 салтакне тата хĕçпăшал нумай çухатнă.

Июнĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июнĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра палла улшăнусемех пулман.

* * *

Противникăн пехотипе, танксем пулăшнипе, Соколов юлташ командир пулса тăракан утлă чаçа (Калинин фрончĕ) атакăланă. Нимĕçсен атакине вĕсене пысăк çухатусем кÿрсе сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен вилнĕ салтакĕсемпе офицерĕсем 620 çын тата хĕçпăшал нумай выртса юлнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 250 çынна ытла, 2 полевой оруди тата темиçе станковăй пулемет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери противникăн орудийĕсен 2 батарейине тата минометсен пĕр батарейине пусарса лартнă. Тепĕр участокра нимĕçсем Васягин юлташăн подразделенине çавăрса илме пилĕк хутчен хăтланса пăхнă. Пирĕн боецсем, вăйлăн çапăçса, 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, ыттисен вара каялла чакма тивнĕ.

* * *

Самохин юлташ командир пулса тăракан авиачасть (Хĕвеланăç фрончĕ) юлашки 7 кун хушшинче темиçе ăнăçлă операци туса ирттернĕ. Пирĕн летчиксем противникăн танкĕсемпе автомашинăсем тиенĕ 4 поездне, 7 танкне, 6 автомашинине, 2 зенитнăй орудине, горючи тултарнă 4 цистернине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен соединенин штабне аркатса тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 8 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пĕр чаçăн военкомĕ Маньковский юлташ 6 автоматчикпа пĕрле танк çине ларса разведкăна кайнă. Танк нимĕçсем йышăнса тăнă П. ялне пысăк хăвăртлăхпа пырса кĕнĕ те противникăн блиндажĕсем çине пеме тытăннă. Гитлеровецсем хушшинче паника пуçланса кайнă. Хĕçпăшалĕсене пăрахса, аллисене тăратса, вĕсем хăйсен хÿтĕлĕхĕсенчен тухнă. Нимĕçсен 59 салтакĕ блиндажсенчен тухса тыткăна парăннă. Хастарлă боецсем тыткăна лекнĕ салтаксене чаçăн командный пунктне çитерсе панă.

* * *

Орел облаçĕнчи партизансен Б. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕç пехотин колоннине аркатса тăкнă. Оккупантсен çапăçу хирĕнче 80 виле выртса юлнă. Пирĕннисем 2 оруди, автоматлă тупă, пулемет тата 5.000 патрон тытса илнĕ. Çав отрядри партизансен пĕр ушкăнĕ чугунçул юсаса çÿрекен поезда ÿпĕнтерсе янă. Паровоз тата 10 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

В. юлташ отрядĕнчи çамрăк партизан Николай венгерецсен чаçĕн штабĕн чÿречинчен взрывчатка çыхса хунă граната пăрахнă. Взрыв пулнипе 12 офицер вилнĕ. Хастарлă партизан пĕр сиенленмесĕр хăйĕн отрядне таврăннă.

* * *

Нимĕçсен 126-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ оберефрейтор Г. Таше çумĕнче унăн Германие тăванĕсем патне ярса ĕлкĕреймен çырăвне тупнă. Унта вăл çапла çырать: «Кивĕ салтаксенчен ротăра 7 çын çеç тăрса юлчĕ. Çухатусем тĕлĕшĕнчен пирĕн дивизи пĕтĕм çарта иккĕмĕш вырăнта тăрать. Пĕррремĕш вырăнта — «СС» дивизийĕ, ун хыççăн — эпир. Шухăшламалли пурах. Пирĕн дивизири хăшпĕр ротăсенче халь 15-шер çын çеç».

* * *

Нимĕç салтакне Гергард Вебера Магдебургран (Германия) çапла çыраççĕ: «Нумай пулмасть кунта пĕр салтак килчĕ. Вăл фронтра аманнă, отпуск хыççăн унăн каллех Российăна каймалла пулнă. Ыран тухса каймалла тенĕ тухне вăл хăйĕн килĕнче пĕрĕнсе вилнĕ».

Социализмлă ăмăртура кам мала тухнă

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе Халăх Комиссариачĕсем металлурги, авиаци тата танк заводĕсен май уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене тунă.

Хура металлурги предприятийĕсенчен Магнитогорскри Сталин ячĕпе тăракан заводăн доменнăй цехĕ, Кузнецкри Сталин ячĕпе тăракан заводăн 1-мĕш номерлĕ мартен цехĕ тата вăтам сортлă прокат тăваракан цех, Кемеровăри заводăн кокс цехĕ тата Высокогорски руднникĕ малти вырăнсене йышăннă. Вĕсем социализмлă ăмăртура хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртнĕ.

Çак предприятисене пурне те Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне параççĕ тата «Совет Союзĕн чи лайăх доменнăй цехĕ», «Совет Союзĕн хурçă шăратакан чи лайăх цехĕ» т. ыт. званисене параççĕ.

Авиаци предприятийĕсенчен 18-мĕш, 29-мĕш тата 292-мĕш номерлĕ заводсем малти вырăнсене йышăннă. Танк заводĕсенчен пĕррремĕш вырăнта—Коминтерн ячĕпе тăракан завод, виçĕ орденлă Кировски завод, Уралри машинăсем тăвакан завод тата 654-мĕш номерлĕ завод. (ТАСС).

Çамрăксем сталинла вахтăна тăчĕç

КАНАШ. Июнĕн 7-мĕшĕнче Мускавра пулса иртнĕ çамрăксен фашизма хирĕçле митингне итленĕ хыççăн ВРЗ-ри комсомолецсемпе çамрăксем 220 çын сталинла вахтăна тăчĕç. Вĕсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕç.

Инструментальнăй цехри комсомолец И. Демьянков вăл кун икĕ станокпа ĕçлесе 5 норма тултарнă. Çав цехрах токарь Л. Красных, яланах 120 — 130 процент тултарса ĕçленĕскер, сталинла вахтăна тăрсан нормăна 450 процент тултарнă.

Механически цехри токарь комсомолец Юраков та вăл кун 350 процент тултарса ĕçленĕ.

Союзра тăман çамрăксем те комсомолецсенчен юласшăн мар. Çамрăк токарь Егеев июнĕн 7-мĕшĕнче нормăна 150 процент тултарнă.

Çамрăксен фашизма хирĕçле митингне итленĕ кун ВРЗ-ри çамрăксем Ленинградри ĕççыннисене пулăшас тĕлĕшпе 3 гектар çĕрулми лартса хăварчĕç.

П. НИКОЛАЕВ.

Çуракинче пысăк ĕç тухăçлăхĕпе тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Наркомземĕпе унăн политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

3. Елчĕк МТС-ĕ (директорĕ **П. А. Яшин** юлташ, политотдел начальникĕ **Г. Ф. Михеев** юлташ, старши механикĕ **В. П. Павлов** юлташ). Вăл МТС çуракинче тракторпа тумалли ĕçсен планне июнĕн 1-мĕш тĕлне 104,8 процент тултарнă. Пур ĕçсене те лайăх пахалăхпа тунă. Çуракинче сухаланă çĕр лаптăкĕ кашни 15 вăйлă трактор пуçне пĕтĕм МТС-ĕпе, вăтамăн илсен, 128,4 гектар тивет. МТС-ри 126 трактористран план тăрăх панă хăйсен заданийĕсене 92 тракторист пурнăçланă, 39 трактористкăран хăйсен заданийĕсене 26 трактористка тултарнă. Трактористсем халĕ çĕртме сухи тăваççĕ.

4. **Шăхасан МТС-ĕ** (директорĕ **Н. К. Константинов** юлташ, политотдел начальникĕ **Ф. С. Ижутов** юлташ, старши механикĕ **И. Н. Северов** юлташ). Вăл МТС çуракинче тракторпа тумалли ĕçсен планне июнĕн 1-мĕш тĕлне 103,7 процент тултарнă. Çуракинче сухаланă çĕр лаптăкĕ кашни 15 вăйлă трактор пуçне пĕтĕм МТС-ĕпе, вăтамăн илсен, 121,8 гектар тивет. Халĕ тракторсем çĕртме сухи тăваççĕ.

5. **Вăрмар МТС-ĕ** (директорĕ **В. Н. Кангин**, политотдел начальникĕ **М. И. Бойков**, старши механикĕ **М. В. Верхунов**). Вăл МТС çуракинче тракторпа тумалли ĕçсен планне июнĕн 1-мĕш тĕлне 101,6 процент тултарнă. Пур ĕçсене те лайăх пахалăхпа тунă. Çуракинче сухаланă çĕр лаптăкĕ кашни 15 вăйлă трактор пуçне пĕтĕм МТС-ĕпе, вăтамăн илсен, 122 гектар тивет. Халĕ тракторсем çĕртме сухи тăваççĕ.

6. **Çĕмĕрле МТС-ĕ** (директорĕ **А. Л. Лаврентьев** юлташ, политотдел начальникĕ **С. П. Савадеров** юлташ, старши механикĕ **Н. М. Петухов** юлташ). Вăл МТС çуракинче тракторпа тумалли ĕçсен планне 100,5 процент тултарнă. Пур ĕçсене те лайăх пахалăхпа тунă. Халĕ тракторсем çĕртме сухи тăваççĕ. Ĕç организованно пырать, тракторсем чарăнса ĕççĕр ларни çук.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн хĕрарăмсен трактор бригадисемпе хĕрарăм-трактористкăсен ăмăртăвне ертсе пырас тĕлĕшпе тунă комиссийĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

86. Вăрмар МТС-ĕнчи **хĕрарăмсен 2-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **Данилов** юлташ). Майăн 22-мĕш тĕлне бригада çурхи ĕçсен планне 102,5 процент тултарнă, ĕçсене пысăк пахалăхпа тунă. Планра кăтартса панă 460 гектар вырăнне бригада 462 гектар сухаланă. Хăйсене пуринчен ытла çак трактористсем палăртнă: **Раиса Семенова** юлташ, вăл, урапаллă СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, хăй сменинче нормăра кăтартса панă 4,2 гектар вырăнне 6,7 гектара çити сухаласа пынă. Ăна улăштаракан **Марфа Кузьмина** юлташ çав норма вырăннех хăй сменинче 5—6-шар гектар сухаласа пынă. Трактористкăсем **Ирина Униферова** тата **Анастасия Родионова** юлташсем У—2 маркăллă тракторпа ĕçлесе, хăйсен нормине кашни кунах ирттерсе тултарса пынă. Вĕсем нормăра кăтартса панă 2,6 гектар вырăнне 5-шер гектара çити сухаласа пынă.

87. **Анастасия Демидова** — Пăрачкав МТС-ĕнчи трактористка. Урапаллă СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, вăл хăй сменинче 77 гектар сухаланă, планра 57,5 гектар кăтартса панă. Горючи чылай перекетленĕ, нормăра кăтартса панинчен 5 процент сахалтарах пĕтернĕ.

88. **Александра Борисова**—Пăрачкав МТС-ĕнчи трактористка. Урапаллă СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, вăл çураки вăхăтĕнче хăй сменинче, çемçе суха çине куçарса шутласан, 75 гектар сухаланă, çурхи ĕçсен планне 130 процент тултарнă. Горючи чылай перекетленĕ, нормăра кăтартса панинчен 7 процент сахалтарах пĕтернĕ.

89. **Елена Кестова** — Чкаловски МТС-ри трактористка. Вăл СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, çурхи ĕçсен планне 188,8 процент тултарнă, 70 килограмм горючи перекетленĕ.

90. **Вера Быркина** — Чкаловски МТС-ри трактористка. Вăл СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, 84,2 гектар сухаланă, çурхи ĕçсен планне 154 процент тултарнă.

91. **Василиса Кузнецова**—Чкаловски МТС-ри трактористка. СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, вăл çуракинче планра кăтартса панă 63 гектар вырăнне 93,9 гектар сухаланă, çурхи ĕçсен планне 149 процент тултарнă.

Çамрăксен фашизма хирĕçле иккĕмĕш митингĕ

Июнĕн 7-мĕшĕнче Мускавра çамрăксен фашизма хирĕçле иккĕмĕш митингĕ пулса иртнĕ.

Тухса калакансем пурте — Совет Союз Геройĕ Коцеба летчик та, Украина партизанки Нина юлташ та, авиаци завочĕн работници Надежда Замиралова та, ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Михайлов юлташ та, çамрăк сталевар Николай Янкин та, Севастополе геройла сыхлакансенчен пĕри моряк Кущенко та тата ытти ораторсем те — Сталинла приказа пурнăçа кĕртме, 1942 çула тăшмана пĕтĕмпех аркатса тăкмалли çулталăк туса хума Совет Союзĕн çамрăкĕсем мĕнпур вăя парасси çинчен каланă.

«Сталин юлташ, — тесе каланă саламлă çырура, — Эсир 1942 çулта нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкма тата совет çĕрне гитлерла мерзавецсенчен ирĕке кăларма приказ патăр.

Аслă Ленина чыслăн асра тытса, эпир Сирĕн умăрта, Сталин юлташ, çав приказа пурнăçа кĕртĕпĕр тесе тупа тăватпăр!»

Пĕтĕм тĕнчери çамрăксем патне яма çырнă чĕнÿре çапла каланă:

— Гитлер çарне кăçал пĕтĕмпех аркатса тăкма пирĕн вăй çителĕклĕ. Çавна пурнăçа кĕртме пĕр çакă кăна кирлĕ: мĕнпур вăя пухмалла та, нимĕçсен фашистла войскисене пĕтерсе тăкмалла тăх пырса çапмалла! Наступленине — малалла! Çĕнтерÿ патнелле — малалла! Фашизма — вилĕм! (ТАСС).

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ÇАМРĂКСЕН ПУХĂВĔ

Июнĕн 7-мĕшĕнче Мускавра çамрăксен фашизма хирĕçле иккĕмĕш митингĕ пулнă. Çав митинг ячĕпе июнĕн 8-мĕшĕнче Советсен çуртĕн залĕнче Шупашкарти çамрăксен пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пуху президиумĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. Андреева, ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ А. Рябов, ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Д. Федоров, ВЛКСМ обкомĕн секретарĕсем П. Михайлов, Л. Михайлов, Р. Хасьянов, ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ А. Охандерова, чăлха çыхакан фабрикăри стахановка Лукояненко, пир-авăр фабрикинчи стахановка Моисеева юлташсем тата отечественнăй аслă вăрçăн участникĕсем пулчĕç.

Тăвăллăн алă çупса пуху хисеплĕ президиума ВКП(б) Центральный Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюро составне суйларĕ.

Çамрăксен фашизма хирĕçле иккĕмĕш митингĕ чĕнсе калани çинчен ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ Михайлов юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн чăлха çыхакан фабрикăри стахановка Лукояненко, пир-авăр фабрикинчи стахановка Моисеева, ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Д. Федоров юлташсем сăмах тухса каларĕç. Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. Андреева тата ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ Р. Хасьянов юлташсем Чăваш республикинчи ĕççыннисенчен майăн пĕррремĕш ячĕпе парне илсе кайнă делегацине боецсемпе командирсем тата политработниксем мĕнле кĕтсе илни çинчен каласа пачĕç.

Пуху пысăк хавхаланупа Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Пухура пулнă çамрăксем Сталин юлташăн приказне пурнăçлас тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлеме пулса решени йышăнчĕç.

МТС-семпе колхозсенчи социализмлă ăмăрту

Ăмăртура мала тухассишĕн хĕрÿ ĕç пырать

ТĂВАЙ. МТС коллективĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнать. 1942 çулта тракторпа тумалли çуллăхи ĕçсен планне трактористсемпе комбайнерсем 105 процент пурнăçлама, горючие нормăна пăхнинчен 7 процент перекетлесе хăварма тата тракторпа ĕçленин хăйне ларакан хакне 5 процент йÿнетме обязательство илчĕç. Çак обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пĕрремĕшшĕн халĕ трактор бригадисем хушшинче хĕрÿ ĕç пырать.

Çуракинчи ĕçсен планне МТС-ăн 7 бригади, урăхла каласан, 41 тракторист ирттерсе пурнăçланă. Егоров юлташ ертсе пыракан трактор бригади çураки вăхăтĕнчи ĕçсен планне 132 процент тултарнă, горючие 312 килограмм перекетлесе хăварнă. Çакăн пек ĕçленипе вăл МТС-ăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Бригада трактористсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнса хăйĕн çулталăкри планне 140 процент пурнăçлама обязательство илчĕ.

Г. Васильев ертсе пыракан трактор бригади çуркуннехи ĕçсен планне 110 процент пурнăçланă. Ку хушăра горючие 854 килограмм перекетлесе хăварнă. Бригада хăйĕн çулталăкри ĕçсен планне 120 процент тултарма обязательство илчĕ.

Кăтартуллăн, вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек, хастарлăн ĕçлеççĕ трактористкăсем: Анна Карзакова — çуракинчи ĕç планне 190 процент пурнăçланă, халĕ вăл çулталăкри ĕçсен планне 200 процентран кая мар тултарса обязательство илчĕ.

Çавăн пекех трактористка Нина Кузьмина çуракинчи ĕçсен планне 177 процент тултарнă, горючие 447 килограмм перекетлесе хăварнă. Халĕ вăл, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри ĕçсен планне 160 процент пурнăçлама сăмах пачĕ.

В. ЧЕРНОВ,
МТС Политотделĕн начальникĕ.

Ĕç тухăçлăхне вăйлăн çĕклерĕç

ÇĔМЕРЛЕ, июнĕн 6-мĕш. (Телефонпа). Куйбышев облаçĕнчи Больше-Раковски МТС коллективĕ пуçарнă МТС, МТМ тата ремонт тăвакан заводсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хут- [illegible]

рентет. Вăл вĕрентсе пынă А. Алексеева, А. Николаева юлташсем халĕ ирхи çĕртме сухинче, тракторсемпе хăйсем тĕлленех ĕçлеççĕ. Сураки вăхăтĕнче вĕ- [illegible]

Х. ЛИСИН.

Кашни гектартан 120 пăт тĕштырă илесшĕн кĕрешеççĕ

КУКЕÇ, июнĕн 7-мĕш. (Телефонпа). [illegible]

Т. ЛОГИНОВ.

Конюхсен обязательстви

КАЛИНИНО, июнĕн 9-мĕш. (Телефонпа). [illegible]

Г. МАТВЕЕВ.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии“ звенине тума

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июнĕн 9-мĕш. (Телефонпа). [illegible] звенине тума укçа-тенкĕ пухасси çинчен чĕнсе каланине колхозсемпе учрежденисенче сÿтсе-яваççĕ. Çав чĕнĕве ăнлантарса пама комсомол тата осоавиахим активĕнчен 20 çын ялсене тухса кайнă.

[illegible] оргинструкторски отдел заведующийĕ Миронов 50 тенкĕ пачĕç.

ГИБИДУЛЛИН,
ВКП(б) Комсомольски райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ.

Çамрăксен воскресникĕ

ШĂХАСАН, июнĕн 9-мĕш. (Телефонпа). Июнĕн 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ воскресникре районри комсомолецсемпе çамрăксем пысăк çĕкленÿпе хутшăнчĕç. Воскресникре пĕтĕмпе 127 çын ĕçленĕ, вĕсем 7 тонна ытла тимĕр-тăмăр пухнă, унсăр пуçне пĕр тонна чăрăш лăсси, 2 килограмм сухăр тата ытти те пухнă. Воскресникре МТС-ри комсомолецсем, пуçламĕш организаци секретарĕ О. Виноградова ертсе пынипе, уйрăмăнах аван тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вĕсем 6 тонна ытла тимĕр-тăмăр пухса панă.

Шăхасанти вăтам шкулти комсомолецсемпе çамрăксем, Соловьева учительница ертсе пынипе, воскресникре 1,5 килограмм сухăр, 2 центнер ытла чăрăш лăсси пухнă.

В. ЯКОВЛЕВ.

Кроса малтанхи кун 20 пин çын ытла хутшăннă

Тулăнмар даннăйсем тăрăх, июнĕн 7-мĕшĕнче, малтанхи кун, профсоюз членĕсемпе комсомолецсен çуллахи никĕслĕн кросне пирĕн республикăри ĕçчеченсем 20 пин çын ытла хутшăннă.

Кросс малтанхи кун Сĕнтĕрвăрри районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ В. Чугунов юлташ) организованно иртнĕ. Унта кроса пурĕ 2 пин çын тухнă. Вĕсенчен 1800 çын нормăсене панă. Сĕнтĕр районĕ те (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Иванова юлташ) малта пырать. Кросра пулнă 1.296 çынран 1.141 çын нормăсене панă. Шупашкар районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Н. Антонов юлташ) 1062 çын хутшăннă, 1.051 çын сырма-çатраллă вырăнсенчен чупса иртсе каяс, граната ывăтас, пластунла шăвас тĕлĕшпе нормăсене панă.

Анчах республикăри хăшпĕр районсенче кросăн малтанхи кунĕн итогĕсем пит мухтанмаллах мар. Шăмăршă районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Кузнецова юлташ) вăл кун кросра мĕнпурĕ те 107 çын пулнă. Вĕсенчен 74 çын нормăсене панă. Шăхасан районĕнче те результатсем чаплах мар. Кроса 137 çын тухнă, 112 çын нормăсене панă. Чкаловски районра малтанхи кун кроса 546 çын хутшăннă, анчах чупас, граната ывăтас, пластунла шăвас тĕлĕшпе 251 çын кăна нормăсене панă. Кросăн участникĕсенчен чылайĕшĕ висĕ нормăран пĕрне те пулин пурнăçлайман. Уйрăмăнах граната ывăтас тĕлĕшпе ĕç начартарах тăрать. Кунтă хăшпĕр организацисенче кроса ситлекĕсĕр хатĕрленсе кĕтсе илни çинчен калать.

Çавăн пекех кросăн малтанхи кунĕн итогĕ кроса колхозри çамрăксем сахал хутшăннине те кăтартса парать. Шупашкар районĕнче малтанхи кун кроса мĕнпурĕ те 11 çын кăна хутшăннă.

Кросс июнĕн 7-мĕшĕнче пуçланса июнĕн 21-мĕшчен пырать. Çителĕксĕр хатĕрленнĕ организацисен хатĕрленÿ ĕçĕсене хăвăртрах туса çитерсе, кашни çамрăка, профсоюзăн кашни членне тата кашни комсомолеца кроса хутшăнтарма тăрăшас пулать.

Стартра 11 çын

КАНАШ. (Хамăр корр., телефонпа). Кросс хулара икĕ вырăнта — кану паркĕнче тата вагонсем юсакан завод стадионĕнче, ялсенче 16 пунктра иртмелле,—тесе пĕлтерчĕ пире кросс пуçланас умĕн оргкомитет председателĕ И. Краснов юлташ. —Малтанхи кун кросра хулари тата ялсенчи организацисенчен сахалтан та 700 çын пулать. Старт ирхине 8 сехетре. Ун çинчен комсомол тата профсоюзсен организацийĕсен руководителĕсем пĕлеççĕ: отношенисем те янă, совещанисем те ирттернĕ...

Июлĕн 7-мĕшĕнче, кĕтнĕ пекех, уяр çанталăк пулчĕ. Ирхине парк патне çамрăксем пухăна пуçларĕç. Комсомол комитечĕн секретарĕн заместителĕ Женя Петрова вокзал çумĕнчи почта отделенинче ĕçлекенсене пĕтĕмпе 11 çын илсе пычĕ.

— Тин кăна пухăннă пирки 8 сехетре çитейменрĕмĕр,—пĕлтерет вăл хăюсăррăн оргкомитет членĕсене. Оргкомитет членĕсем унпала килĕшрĕç.

— Вăл юрĕ-ха, ытти организацисем çитеймерĕç,—тесе ответлерĕç.

Кĕтетпĕр. 11 сехет те иртрĕ, кĕçех 12 сехет çитет. Кроса хутшăнма почтăра ĕçлекенсемсĕр пуçне всевобуч боецĕсем 70 çын пычĕç. Кроса пуçлама юрать ĕнтĕ. Анчах... судьясен коллегийĕнче пĕр çын та çук, дистанцисем те хатĕр мар. Хатĕрленÿ ĕçне туса 2 сехет иртрĕ—судьясем çапах килмерĕç. Оргкомитет председателĕ Краснов, ВКП(б) хула комитечĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Данилов юлташсем кроса пынисен хушшинченех судьясем пулма уйăрчĕç. Вĕсене васкавлăн кросăн положенипе паллаштарчĕç.

Главнăй судья всевобуч подразделенийĕн командирĕ Белов юлташ кроса килнисен списокне тума хушрĕ. Кросс пуçланчĕ. Граната ывăтассипе 70 çынран 19-шĕ нормăсене пачĕç. Пластунла шума тытăнчĕç. Кросс участникĕ кашни хăй пĕлнĕ пек шăвать. Çĕр çумĕпе шăппăн тата курăнмалла мар шăвас вырăнне вĕсем чĕркуçленсе тăватуран упаленеççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, кăна ячĕшĕн çеç тăваççĕ.

Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен кросĕ кăçал вăрçă условийĕсенче пулса иртет. Çавăнпа пластунла шума, гранатăна инçе те тĕл ывăтма, çырма-çатраллă вырăнсенче чупма вĕренессине ячĕшĕн çеç тукаласа ирттерни пачах килĕшÿсĕр. Çакна канашсем ăнланман-ха.

«Ăçта-ха 700 участник»—çак ыйтупа каллех Краснов юлташ патне пытăмăр. Вăл çапла ответлерĕ:

— Эпир кроса ирттерме июнĕн 5-мĕшĕнчех тытăннă. Педучилищĕре вĕренекенсем висĕмкунах ирттернĕ. Вĕсене кросра паян пулнă тесе шутлатпăр та, районĕпе 700 çынран та иртет вăл.

Кросра лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ

КУКЕÇ. Малтанхи кун кроса пурĕ 1069 çын хутшăннă. Вĕсенчен 1051 çын нормăсене çитернĕ. Кросра комсомолецсем 184 çын, профсоюз членĕсем 130 çын, шкул ачисемпе пионерсем 755 çын пулнă.

Толиково кустĕнче пурĕ кроса 264 çын тухнă, 256 çын нормăсене панă. Н. Николаев комсомолец пĕр километра 2 минута та 55 секундăра çитсе ăмăртура малти вырăна тухнă. Гранатăна вăл 51 метра ывăтнă.

Кÿкеç кустĕнче ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ пулса ĕçлекен Ластухин юлташ аван тĕслĕх кăтартрĕ. Вăл пĕр километра 3 минутăра чупса тухрĕ, гранатăна 47 метра ывăтрĕ.

Шкул ачисемпе пионерсен те кросри результачĕсем япăх мар. Нумай пулмасть Ленинла комсомол ретне илнĕ Анатолий Александров пĕр километра 2 минута та 45 секундăра, Антонина Орлова 500 метра 1 минута та 43 секундăра чупса тухрĕç.

Малтанхи кун кросс 8 кустра пулса иртрĕ. Пур çĕрте те колхозри çамрăксем сахалтарах хутшăнни палăрчĕ. Çавăнпа кроса колхоз çамрăкĕсене ытларах хутшăнтарасси пирĕн умри тĕп задача пулса тăрать.

Н. АНТОНОВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ. (Телефон тăрăх). Кросс пуçланнă май хулари комсомолецсемпе профсоюз членĕсен митингĕ пулса иртрĕ. Унта ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Чугунов, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Борзов юлташсем тухса сăмах каларĕç. Кайран граната ывăтассипе, пластунла шăвассипе ăмăртусем пулса иртрĕç.

Районĕпе кроса пĕтĕмпе 1806 çын хутшăннă, вĕсенчен 140-шĕ—пединститут коллективĕнчен.

ШИПУНОВА.

Хĕрарăмсем çар ĕçне вĕренеççĕ

Вăрçă вăхăтĕнчи условисем пирĕн çĕршывăн кашни гражданинне çар ĕçне пĕлме хушаççĕ. Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнчи приказра пирĕн çар ĕçне лайăх вĕренсе çитме кирлине кăтартса пачĕ. Тылри совет гражданĕсем производствăра хастарлă ĕçленипе пĕрлех çар ĕçне те вĕренсе пыраççĕ. Пирĕн хĕрарăмсем те çар специальноçне туяхма тăрăшаççĕ.

Чăваш республикинчи пур районсенче те 110 сехетлĕ программа тăрăх çар ĕçне вĕренекен хĕрарăмсен подразделенийĕсене тунă. Уйрăм командăсемпе подразделенисенче хĕрарăмсем вăрçăра çапăçма лайăх вĕренсе пыни палăрать.

1942 çулти майăн 2-мĕшĕнче осоавиахимăн Калинински райсоветĕнче 42 хĕрача пĕлтертан тĕл пересси́пе испытани тытнă, вĕсенчен 13 çын «отлично», 22 çын — «хорошо» паллăсем илнĕ. Вĕсем винтовкăна, миномета, гранатăна мĕнле туни çинчен тĕплĕн тата уçăмлăн каласа панă, çав хĕçпăшалсене кăварт сÿтсе пуçтарнă. Çавăн пекех вĕсем компаспа усă курма вĕренсе çитнĕ. Испытание ирттерекен сержант Костроминпа комисси членĕсем ыйтнисем çине вĕсем тĕрĕс ответ панă. Теорие лайăх вĕреннине пула, вĕсем практикăллă задачăсене татса пама та çителĕклĕ хăнăхса пыраççĕ. Çамрăк стрелок Ольга Гаврилова пĕчĕк калибрлă винтовкăран персе 30 очкоран 27 очко илнĕ.

Ишлей районĕнче майăн 18-мĕшĕнче 37 комсомолка çар ĕçне 110 сехетлĕ программа тăрăх вĕренсе тухнă. Вĕсенчен испытанире 14 çын — «отлично», 16 çын «хорошо» паллăсем илме пултарнă. Куславкка, Советски тата Сĕнтĕр районĕсенче те хĕрарăмсем çар ĕçне вĕренме тытăннă.

Хĕрарăмсен командисемпе подразделенийĕсенче занятисем пысăк пахалăхпа иртеççĕ, дисциплина çирĕп. Хĕрарăмсене çар ĕçне вĕрентме Осоавиахим райсовечĕсен работникĕсене тата отечественнăй вăрçă фронтĕнчен аманса таврăннă командирсене хутшăнтарнă. Çак командирсем хăйсен ĕçне юратса туса пыраççĕ, хăйсен çапăçури опычĕсем çинчен хĕрарăмсене каласа кăтартаççĕ, вăрçăра пĕлсе çапăçма вĕрентеççĕ.

Çар ĕçне вĕренсе, совет хĕрарăмĕсем тăван çĕршывăн хастарлăн та хăюллăн, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр тăшмана хирĕç çапăçакан совет воинĕсем пулма хатĕрленеççĕ.

З. МИРОНОВА,
Осоавиахимăн Чăваш республикинчи Центральный Совечĕн орготдел начальникĕ.

Гитлерла захватчиксем совет граждăнĕсенчен мăшкăллани

Гамбург хулинче тухса тăракан гитлерла хаçатра çар корреспонденчĕн статьине пичетлесе кăларнă. Çак фашистла корреспондент вăхăтлăха оккупациленĕ совет районĕсенче пурăнакансене нимĕç захватчикĕсем мĕнле тыткалани çинчен çырса кăтартать. Ирхине нимĕçсем хулара пурăнакансене пурне те — ачасене, хĕрарăмсене, ватă стариксене — ятран чĕнме хуса тухаççĕ, унтан вĕсене ĕçе уйăрса яраççĕ. Пĕрисене нимĕç салтакĕсем пурăнакан çуртсене юсаттараççĕ, теприсене урамсене тасаттараççĕ, виççĕмĕшсене салтаксен кĕпе-йĕмĕсене çутараççĕ.

Кам итлеме шутламасть, — тесе çырать корреспондент, ăна хĕрхенÿсĕр асаплантарасси кĕтет.

Нимĕçсем хулара пурăнакансенчен мĕншуп апат-çимĕçсене туртса илнĕ. Унта халĕ лаша апи те тутлă çимĕç шутланать. (ТАСС).

Германири çулсем беженецсемпе тулса ларнă

Ютçĕршыв хаçачĕсен корреспонденчĕсем çапла пĕлтереççĕ: Акгли авиацийĕ Германи çине юлашки вăхăтра вĕçсе пырса тапăннисем Рейнпа Рур облаçĕсене нумай çĕмĕрнĕ, çавна пула унта пурăнакансем вăл вырăнсене пăрахса каяççĕ. Унти çулсем беженецсемпе тулса ларнă. Чылай рабочисем предприятисенчен тухса кайнă.

Çак кунсенче Германири радио Рур рабочийĕсемпе калаçнине пĕлтернĕ. Рур облаçĕнчи рабочи-металлург акă мĕн каласа панă: «Сывлăшри тревогăсем чарăнмаççĕ. Эпир кашни кун 13-шер сехет бомбоубежищĕсенче ларса иртеретпĕр, пирĕн ĕçе те çавăнтан тÿрех кайма тивет». (ТАСС).

Германи самолечĕсем татах Швеци территорийĕ çийĕнче вĕçнĕ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 7-мĕш. (ТАСС). Швецин телеграф агентстви çапла пĕлтерет: «Июнĕн 4-мĕшĕнче каçхине Калипс районĕнче (Çурçĕр Швецире) Швеци территорийĕ çине çурçĕр енчен вĕçсе пынă нимĕçсен икĕ самолетне пенĕ. Сывлăша Швецин истребителĕсем вĕçсе хăпарнă. Вара Германи самолечĕсем хĕвелтухăçнелле вĕçсе кайнă. Меллефтео районĕнче официальнăй йĕркепе йышăннă çула пăсса вĕçсе пыракан Германин курьерски самолетне асăрхаттарса пенĕ. Бухусленăн çурçĕр пайĕнче (Хĕвеланăç Швецире) Германи самолечĕ Норвеги еннелле вĕçсе кайнине курнă».

Виши правителĕсем Японин требованийĕсене йышăннă

«Ньюс уик» журнал çапла пĕлтерет: Вишири влаçсем Индо-Китайра Япония контроль туса тăрассипе пĕтĕмĕшпех килĕшнĕ. Лаваль японецсене Индо-Китайпа, ăна вăрçă бази вырăнне хурса, 1943 çулччен усă курма ирĕк панă. Анчах японецсен çак правине 1943 çулта çĕнĕрен малалла тăсаççĕ.

Виши правителĕсем японецсене тата чылай урăх ĕçсем тĕлĕшпе те усă кăтартмашкăн пулнă, анчах та вĕсем çинчен официальнăй йĕркепе нимĕн те пĕлтермеççĕ. (ТАСС).

Çапăçакан енсен авиацийĕсен май уйăхĕнчи çухатăвĕсем

Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, май уйăхĕнче Англи авиацийĕн Англи çинче çухатусем пулман. Тĕнĕл çĕршывĕсен Англи çинче тата унăн çыранĕсем сывăхĕнче 34 самолет пĕтнĕ. Европа çинче Англи 194 самолет, тĕнĕл çĕршывĕсем 62 самолет çухатнă; Çывăх Хĕвелтухăçĕнче: Англи 107 самолет, тĕнĕл çĕршывĕсем 187 самолет çухатнă. Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Японин самолечĕсене 100 ытла персе ÿкернĕ. (ТАСС).

Мидуэй утравĕ çывăхĕнчи тинĕсри тата сывлăшри çапăçу

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Пирл-Харбортан пĕлтернĕ тăрăх, Лăпкă тинĕсĕн вăтам пайĕнче тинĕсри тата сывлăшри пысăк çапăçу пуçланса кайнă. Мидуэй утравĕ çывăхĕнчи авианосецсем çине вырнаçнă Япони самолечĕсен атакисене сирсе, Америка авиацийĕ Японин авианосецне тата ытти суднисене сиен кÿнĕ, нумай самолечĕсене персе ÿкернĕ.

Илнĕ сведенисем тăрăх, тесе çырать корреспондент, Мидуэй утравĕ çывăхĕнчи тинĕсри тата сывлăшри çапăçусен малтанхи тапхăрĕ Америкăн сывлăшри вăйĕсемшĕн ăнăçлăн аталанса пырать. Вĕсем Япони карапĕсене малалла атакăласа пыраççĕ. (ТАСС).

Англипе Инди хушшинчи килĕшÿсем

Информаци министерстви çакăн çинчен пĕлтерет: Англин тата Индин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕсем пĕр-пĕринпе килĕшÿ туса алă пуснă; çав килĕшÿре икĕ çĕршыв та ку вăрçа ăнăçлăн вĕçличченех туса пыма тăрăшни çинчен каланă. Çавăнпа пĕрлех тата Индин хĕçпăшаллă вăйĕсене упрани питех те кирлĕ ĕç пулса тăни çинчен каланă; çав вăйсемпе союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăрассине организацилес принципсене палăртнă. Индин типçĕр çинчи çар чăçĕсем тата авиаци чăçĕсем 1940 çулти çуллапа Англире тăраççĕ. Тĕмиçе уйăх каярах Индин истребителĕсен эскадрильине тунă.

Çав килĕшÿре тата Инди флотне тума палăртнă. Индин халĕ флотра тăракан йышлă офицерĕсемпе матросĕсен çумне хутшăнтарма çĕнĕ кадрсем хатĕрлемелле.

Иккĕмĕш килĕшÿ Индин Конговĕпе суту-илÿ тăвас тĕлĕшпе 1941 çулти январĕн 21-мĕшĕнче тунă килĕшĕве улăштарать. Инди Конговĕпе суту-илÿ туни союзниксен вăрçăпа çар ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнать. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КАЗАНСКИЙ ЮРИДИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ НАРКОМЮСТА СССР
об'являет набор студентов на 1-й курс 1942—43 учебн. года.

Институт готовит юристов для работы в органах суда, прокуратуры и адвокатуры. Срок обучения 3 года. В Институт принимаются граждане, имеющие законченное среднее образование.

Окончившие среднюю школу в 1941 и 1942 г.г. принимаются без испытаний. Все остальные подвергаются приемным испытаниям по русскому языку и литературе (устно и письменно), истории народов СССР и географии.

Поступающие в Институт подают заявление и прилагают автобиографию, аттестат об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике), три фотокарточки.

В Институт могут быть зачислены на II и III курс студенты юридических Институтов, по тем или иным причинам прекратившие занятия.

Адрес Института: гор. Казань, ул. Чернышевского, дом № 27, тел. № 21—78.
ДИРЕКЦИЯ.

ВУРНАРСКИЙ ЗООВЕТТЕХНИКУМ ЧУВАШСКОЙ АССР
об'являет прием учащихся на 1-й курс зоотехнического и ветеринарного отделений.

На 1-й курс принимаются граждане СССР в возрасте от 15 до 35 лет, имеющие подготовку не ниже неполной средней школы.

Прием заявлений о зачислении производится с 1 мая по 25 августа.

К заявлению должны быть приложены:
а) свидетельство об образовании; б) справка о годе рождения; в) справка о здоровье.

Окончившие в 1941 и 1942 годах седьмой класс неполной средней школы, 8, 9 и 10 классов средней школы, а также лица, демобилизованные из рядов РККА, имеющие подготовку не менее семи классов НСШ (независимо от времени ее окончания), принимаются без испытаний.

Все остальные подготавливаются к приемным испытаниям по Конституции СССР, русскому языку и литературе, математике, физике и родному языку.

Окончившие НСШ и СШ на «отлично» и материально нуждающиеся демобилизованные военнослужащие зачисляются на гос. стипендию.

Заявления с указанием, в какое отделение желает поступить, направлять по адресу: д. Булатово, Вурнарского района ЧАССР.
ДИРЕКЦИЯ ЗООВЕТТЕХНИКУМА.

ЧУВАШСКАЯ КОНТОРА ГЛАВКИНОПРОКАТ
с 12 июня выпускает на экраны республики новый художественный фильм
ДОЧЬ МОРЯКА
Автор сценария А. НОВОГРУДСКИЙ, режиссер Г. ТАСИН.
В ГЛАВНЫХ РОЛЯХ:
арт. ТАМАРА БЕЛЯЕВА.
Лауреат Сталинской премии засл. арт. РСФСР орденоносец И. ПЕЛЬТЦЕР.
Производство Орденоносной Киностудии.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 162 / [illegible] ления полиграфпромышленности при Гор. Чебоксары, типография № 1 УпраеСНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 [illegible]